“Трактор” уйăхлăх-операцие пĕтĕмлетсе мĕн калама пулать?

# Тракторсемпе ĕçленĕ чух никамшăн та вак-тĕвек çук

Алăкран кĕркунне шакканă май ял хуçалăхĕнче чи хĕрӳ ĕç çи тапхăрĕ пырать: мĕн акнине тĕрĕс-тĕкел пуçтарса илсе тутă хĕл кунĕсен никĕсне хывмалла, малашлăха пăхса кĕрхи культурăсене çителĕклĕ акса хăвармалла. Çак вăхăтра, паллах, тракторсемпе вĕсен прицепĕсемсĕр, хăй тĕллĕн çӳрекен ытти техникăсăр ĕçсене агротехника ыйтнă пек пахалăхпа вăхăтра пурнăçлама çук. Анчах çакна курса-пĕлсе тăраканăн ку чухне асăрханулăх пирки самантлăха та манма юрамасть. Ĕçсене халăх йышлă хутшăннă тапхăрта çакă уйрăмах пĕлтерĕшлĕ. Кăна шута илсе республикăра çулленех август уйăхĕнче “Трактор” профилактика уйăхлăх-операци ирттересси йăлара. Авăн уйăхне кĕнĕ май ăна пĕтĕмлетме те вăхăт ĕнтĕ. Асăннă тапхăрта патшалăх техника надзор инспекцийĕн ĕçченĕсем çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕпе пĕрле çынсен тата предприяти-организацисен харпăрлăхĕнчи усă куракан тракторсемпе прицепсем тата хăй тĕллĕн çӳрекен ытти техника тĕлĕшпе уйрăмах тимлĕ пулчĕç. Тĕрĕслевсем вăхăтĕнче техникăна техосмотр тăратнине пăхасси, юсавсăр тата учета тăратман техникăпа ĕçе тухнине палăртасси, питех те кивелнĕ техникăна учетран кăларасси малти вырăнта тăчĕ. Уйăхлăхра районта Чăваш Республикинчи хăй тĕллĕн çӳрекен тата ытти техникăна пăхса тăракан Патшалăх инспекцийĕн пуçлăхĕ В. Димитриев тата Шупашкар районĕнчи патшалăх техника надзорĕн аслă инспекторĕ В. Михайлов пулса тĕрĕслевсем ирттерни уйăхлăх яваплăхне ӳстерчĕ кăна.


В. П. Димитриев районта ирттернĕ рейдра.

Мĕн курăнать-ха уйăхлăха пĕтĕмлетнĕ май?

В. Димитриев районта пулни пирки тата вăл хутшăннипе ирттернĕ тĕрĕслевсем (августăн 22-мĕшĕ) çинчен августăн 29-мĕшĕнче çырса пĕлтернĕччĕ. Августăн 24-мĕшĕнче вара районти тĕрĕслевсене Шупашкар районĕнчи патшалăх техника надзорĕн аслă инспекторĕ В. Михайлов хутшăнчĕ. Пирĕн районти ĕçтешĕпе С. Николаевпа вĕсем çав кун Чапаев яч. хис., Е. Андреев яч. хис., “Оринино”, “Герой”, “Лидер” хуçалăхсенче пулчĕç тата çак тăрăхри ялсенче трактор тытакан уйрăм çынсен харпăрлăхĕнчи техника епле ĕçленипе паллашрĕç. Каламалла, çак кун тĕрĕслев серепине çакланнă 18 тракторпа 4 прицеп тата 7 “хир карапĕ” 6 механизатор тĕлĕшпе протоколсем çыртарчĕç. Вĕсен халĕ 1100 тенкĕ штраф тӳлеме тивет. Мĕнле çитменлĕхсем хистерĕç-ха яваплăх тыттарма? Тĕп çитменлĕх вăл – механизаторсен çумра тракторист-машинист удостоверенийĕпе техникăна регистрацилени çинчен калакан свидетельство тата техникăпа ĕçлеме ирĕк паракан талон-допускпа страховка полисĕ çукки. Ку документсене çумра тытасси – кашни механизаторăн тивĕçĕ. Çаксемпе пĕрлех трактористсем прицепсене страховка сăнчăрĕсемпе тытăнтарманни, прицепсем çине çынсене лартса çӳрени, прицепсем çинчи фонарьсем юсавсăр пулни, специалистсем пăхса çитерейменрен çул çине юсавсăр тракторсем тухни, вĕсем çинче топливо-çу юхни, ĕçлекен техника пушар хăрушсăрлăх правилисене тивĕçтерменни лару-тăру кăткăслăхне ӳстерчĕç кăна.

Уйăхлăх кăтартăвĕ пĕтĕмĕшле çапла.

Август уйăхĕнче пĕтĕмпе 116 тракторпа прицепа тата хăй тĕллĕн çӳрекен ытти машинăсене тĕрĕслерĕмĕр. Çитменлĕхсем вара çул çине е ĕçе тухакан кашни çын умне хăрушлăх кăларса тăратаканнисем. Чылайăшĕ йĕркене пăхăнать пулин те, çул-йĕр хăрушсăрлăх требованийĕсене пăсакан юсавсăр техникăна рейса кăларнă 6 тĕслĕх, хăрушсăрлăх техникине пăснипе 8 тĕслĕх, патшалăх регистраци правилисене пăхăнмасăр çула тухнă 12 тĕслĕх, техосмотр тăмасăр усă куракан 9 тĕслĕх куç умне пулчĕ. Çаксем тата рейса тухакан механизатор пачах тракторист-машинист удостоверенийĕсĕр (1 çын) пулни, унăн кирлĕ категорипе усă курма палла çукки (1 çын), регистраци документĕ çумра пулманни (12), путевкăсăр ĕçе тухни (4), техосмотр талонĕ пулманни (13) механизаторсемпе инженерсене самай шухăшлаттармалла.

Çитменлĕхсене пĕтерме 24 тракторист-машиниста тата водителе административлă майпа ответ тыттарма, юридициллĕ вăйра тăракан 4 предприяти пирки протокол çырма тиврĕ.

Кăçалхи “Трактор” уйăхлăх-операцире июлĕн 8-мĕшĕнче вăя кĕнĕ “Раççей Федерацийĕн административлă майпа правăна пăсни çинчен калакан Кодексне административлă майпа правăна пăснăшăн укçан шыраса илес пая улшăнусем кĕртесси çинчен” Федераллă саккун малти вырăнта пулчĕ. Кунти çĕнĕлĕхсем тракторсемпе ĕçлекен кашни механизатор-инженера тата ертӳçĕне шухăшлаттарма тивĕç. Юсавлă техникăпа ĕçлени ĕç пахалăхĕпе калăпăшне ӳстерет кăна, ял хуçалăхне аталантарма пăхнă наци проектне пурнăçа кĕртме хушма вăй кĕртет.

**С. НИКОЛАЕВ,**
**ЧР патшалăх техника надзорĕн районти аслă инспекторĕ;**

Профилактика тĕл пулăвĕсем

# Ачасем тата пушар хăрушсăрлăхĕ

Ачасем пирĕн пуласлăх тетпĕр те вĕсем çине пысăк шанăç хуратпăр. Чăваш Республикин Президенчĕ Н. Федоров та çак ыйтва самантлăха та кун йĕркинчен кăлармасть. “Ачасемпе амăшĕсем пирки шутланинчен ытларах таса пулăм çук. Ачамăрсен пурте йĕркеллĕ пулни тата ашшĕ-амăшĕсем вĕсемшĕн савăнни – общество сывлăхĕн тĕп кăтартăвĕ. Çак тĕллевпе аталанать паянхи Чăваш Республики” – çапла унăн гражданла позицийĕ.

Пирĕн районти Шомик тăрăхĕнче ачасен çуллахи тата сывату лагерĕсем пĕрре мар. Вĕсенче каникул кунĕсенче те, ытти вăхăтра та пиншер ача канать тата сывлăхне çирĕплетет. Ачасен канăвĕпе сипленĕвĕ усăсăр ан иртчĕр тесе республикăри пушара хирĕç пропагандăлас центр, республикăри ВДПО организацийĕн пирĕн районти уйрăмĕ тата районти патшалăх пушар надзорĕн уйрăмĕ çу кунĕсенче ачасене пушар хăрушсăрлăх правилисене вĕрентессипе пысăк ĕç туса ирттерессĕ. Акă черетлĕ вĕренӳ çулĕ пуçланас умĕн “Республикăри ачасен клиника больници” патшалăх сывату учрежденийĕн “Алый парус” лагерĕнче канакан-сипленекен ачасемпе малашрах асăннă пушар хурал организацийĕсен ĕçченĕсем ĕçлĕ тĕл пулу ирттерчĕç.

Эпир пынă кун лагерьте 145 ача канса сывлăхне çирĕплететчĕ. Кашнин куçĕнчех хаваслă малашлăх, пичĕсенчи йăл кулăсенче аслисене хăйсем пирки шутланăшăн тав туни, таса та çутă ăнтăлу. Пакунлă хĕрарăмсем, МЧС формиллĕ арçынсем лагере пырса кĕни ачасене тĕлĕнтерни пĕрремĕш тĕл пулурах курăнчĕ. “Мĕн пулнă? Мĕн тума килнĕ?” ыйтусем ачасем хушшинче хăвăрт вăй илнĕ çĕнĕлĕх пулчĕ. Çавăнпа та пĕр çĕре пухăнма ыйтсан та вĕсем нумай кĕттермерĕç. Пушар тата унран сыхланасси, шыв çинчи асăрханулăх кашниншĕнех çывăх ыйтусем пулнăран ачасем май килнипе хăйсем ку ыйтусемпе пĕлменнисене те хальтерех пĕтерме тăрăшрĕç. Ыйтăвĕсем хатĕр ĕнтĕ вĕсен. Хуравлакан ĕсем те умрах.

Ачасемпе малтанах Раççейри ВДПО-н Чăваш Республикинчи уйрăмĕн Муркашри пайĕн ертӳçи В. Яндушкин тĕл пулу ирттерчĕ, ачасенче “Ачасем тата пушар хăрушсăрлăхĕ” темăпа калаçу ирттерме ыйтусем çуратрĕ. Çавăнпа та республикăри пушара хирĕç пропагандăлас центр преподавателĕ Елена Сурьянинова пуçарнă калаçу ачасен хастарлăхĕпе палăрчĕ. Хăйсен шайĕнче ирттернĕ калаçуран ачасем вут-çулăмпа асăрханулла пулмаллине манас çуккине, шăрпăкпа вылямалла маррине, аслисемсĕр вучах чĕртме юраманнине уçăмлă ăнланчĕç,


**О.В. Нягинапа В. А. Топтыгинăн каласа ăнлантармалли чылай.**

çакна хăйсем панă ыйтусенче кăтартрĕç.

Республикăра вара ачасем шăрпăкпа вылянипе тухнă пушар тĕслĕхĕсем кăçал та сахал мар. Çакăн пирки пухăннисене Раççей Чрезвычайлă лару-тăру министерствин Чăваш Республикинчи Тĕп управленийĕн пропаганда тата общество çыхăнăвĕн уйрăмĕн пуçлăхĕ Е. Нягинапа “ЧР пушарпа кĕрешекен служба” патшалăх учрежденийĕн профилактика инструкторĕ И. Егорова каласа пачĕç, хăйсен сăмахĕсене тĕслĕхсемпе çирĕплетрĕç. Вĕсем çаксем:

– Июнĕн 27-мĕшĕнче 4-мĕшпе 2-мĕш классенче вĕренекен арçын ачасем шăрпăкпа вылянипе Çатракасси ял тăрăхĕнчи Çĕньял Хуракассинчи В. Теплов хуçалăхĕ пĕтĕмпех çунса кайнă.

– Августăн 3-мĕшĕнче Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи Тури Панкли ялĕнче кил хуçи ачисем шăрпăкпа вылянăран хуçалăхри хушма хуралтăсем çунса кайнă;

Кун йышши инкексен тĕслĕхĕсем республикăра та пур. Аслисен тимсĕрлĕхĕпе ачасен выляв̆ĕ пӳрт-çурт кĕлленнипе пĕрлех çынсен пурнăçне татать:

– апрелĕн 2-мĕшĕнче Вăрнар районĕнчи Пăртас ялĕнчи 7 çулхи ача шкултан таврăнсан ашшĕ-амăшĕсем çуккипе усă курса юлташĕпе алла шăрпăк тытать. Пĕтĕмлетӳ: пӳрт çивиттийĕпе веранда юрăхсăра тухнă;

– апрелĕн 5-мĕшĕ. Канаш районĕнчи Атнаш ялĕнче 10 çулхи Олегпа 9 çулхи Марина хуçасăр кил картишĕнче ыв̆аничченвылянă хыççăн мунча маччи çине хăпарсан унта тупнă чиркӳре усă куракан лампадăна (кивĕскер) чĕртсе пăхма шутлаççĕ. Çулăм вăйланса кайсан ачасем хăраса тухса тараççĕ;

– апрелĕн 9-мĕшĕ. Куславкка районĕнчи Илепар ялĕ. Килте пĕччен юлнă 4 çулхи Дениспа 5 çулхи Юля шăрпăк илсе теттесен курупкине тивертеççĕ. Çулăм вăйлансан ачасем курупкана кĕпесем упранакан шкафа “пытарса” урама чупса тухаççĕ. Магазинран вăхăтра таврăннă ашшĕ çулăма вăй илме памасть;

– апрелĕн 9-мĕшĕ. Çĕмĕрле районĕнчи Красный Октябрь поселокĕ. 7 çулхи хĕрача сарай çумĕнче выртакан кивĕ улăма чĕртсе ярать. Вăхăтра çитнĕ пулăшу çеç пысăк тăкаксене ура хурать;

– апрелĕн 23-мĕшĕ. Ачасем шăрпăкпа вылянипе Етĕрне районĕнчи Исментер ялĕнче пурăнмалли çуртпа ампар тĕппипе çунса каяççĕ;

– майăн 27-мĕшĕ. 8 çулхи арçын ача шăрпăкпа вылянăран Шăмăршă районĕнчи Палтиел ялĕнче килти улăм ури çунса кайнă, хушма хуралтăсем сиенленнĕ;

– майăн 28-мĕшĕ. Çĕрпӳ районĕнчи Çатра ялĕнче ача шăрпăкпа вылянинчен пушар тухнă, выльăхсем çунса кайнă;

– майăн 28-мĕшĕ. Çĕрпӳ районĕнчи Çатра ялĕнче 6 çулхи ача шăрпăкпа вылянăран тухнă пушарта хушма хуралтăсем тĕппипех çунса кайнă;

– июнĕн 3-мĕшĕ. Ачасем çулăмпа асăрханусăр пулнăран Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Чермĕш ялĕнче тухнă пушарта йывăç сарай кĕлленнĕ;

– июнĕн 4-мĕшĕ. Ачасем шăрпăкпа вылянăран Вăрнар районĕнчи Çăкаллă Явăш ялĕнче йывăç сарай сиенленнĕ;

– июнĕн 12-мĕшĕнче 4 çулхи ача шăрпăк тытнăран Вăрмар районĕнчи Пысăк Енккасси ялĕнче тухнă пушарта асламăшĕпе ача пурнăçĕ татăлнă;

– июнĕн 15-мĕшĕнче 6 çулхи ача шăрпăкпа асăрханусăр пулнипе Вăрнар районĕнчи Çĕн Хирпуç ялĕнче тăвată кил хуçалăх тĕппипех кĕл пулнă.

Халĕ илсе кăтартнă тĕслĕхсем инкексен пĕр пайĕ кăна. Çакă ачасемпе пушар хăрушсăрлăх ыйтăвĕсемпе ĕçлессине мала кăлармалли пирки пĕлтерет.

Ачасемпе шыв таврашĕнче те асăрханулла пулмалли пирки çак тĕл пулура шыв çинчи патруль службин пуçлăхĕ В. Топтыгин каласа пачĕ, инкексенчен пăрăнса иртме ачасен хăйсен тата аслисен мĕн тумалли çинче чарăнса тăчĕ.

Тĕл пулу викторина мелĕпе иртрĕ. Ачасем хăйсемпе тĕл пулу ирттернĕшĕн МЧС ĕçченĕсене тав сăмахĕ каларĕç.

**А. БЕЛОВ.**

Терроризма хирĕç

# Йĕркене пĕлмелле

– Лăпкă пурăнатпăр тесе тимлĕхе никамăн та иккĕмĕш вырăна хăварма юрамасть. Çурçĕр Кавказри Бесланри шкула террористсем пырса кĕни тата çак шкулта вĕсен айăпĕпе ачасен пурнăçĕ вăхăтсăр татăлни Раççей халăхĕн асĕнчен нихăçан та тухмĕ. Иртни иртнипе кăна ан юлтăр тесен пирĕн паян та тимлĕхе самантлăха та çухатма кирлĕ


**Вĕрентĕве çар комиссарĕ А. Прокопьев подполковник активлă хутшăнчĕ, усăллă сĕнӳсем пачĕ.**

мар. Паянхи вĕренӳ çак ĕçĕн пĕр сыпăкĕ, – терĕ Муркаш лицейĕнче патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕпе ирттернĕ вĕрентĕве пуçланă май районти çар ĕç комиссарĕ Александр Геннадьевич Прокопьев Раççейре тата тĕнчере юлашки çулсенче пулнă терроризмла ĕçсемпе паллаштарса тата унпа кĕрешме ялан сыхă пулнине нимĕн те çитменнине палăртса.

Терроризмла ĕçсем яланах вут-çулăм алхаснипе çыхăнса тăраççĕ. Кун пек чухне вара ирĕке кайнă пушарпа кĕрешесси те, çак ĕçре кĕрешӳ мелĕсене пĕлесси те малти вырăнта. Вĕрентӳллĕ эвакуацие ăнăçлă ирттернĕ хыççăн районти пушар хăрушсăрлăхĕ тата ирĕке кайнă “хĕрлĕ автанпа” кĕрешмелли ĕçри çĕнĕлĕхсем çинчен лицейре вĕренекенсемпе вĕрентекенĕсене патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн пуçлăхĕ Илья Николаевич Смирнов каласа пачĕ.

Вĕрентĕвĕн практикăлла пайĕнче ачасем условнăй пушара огнетушительпе сӳнтерме вĕренчĕç тата сӳнтерчĕç. “Ăс тата пĕлӳ пулсан, инкекпе кĕрешме те ансат”, – пĕтĕмлетрĕç ачасем вĕрентĕве.

**А. ПЕТРОВ.**


**Çулăмпа кĕрешме пĕлсен унăн хăрушлăхĕ иккĕмĕш вырăна юлать.**